**Шкула**
Каллех шкула, каллех шкула
Васкатпăр кунсерен.
Ах, лайăх-çке пире кунта
Юратнă шкулăм кĕтнĕрен.
Вулатпăр, ăс пухатпăр –
Çын пулмашкăн тăрăшатпăр.
**Данил Албуткин.**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул**

**Шăллăм**
Хамăн пĕчĕк шăллăма
Эпĕ чĕнтĕм урама,
Выляма та хыт кулма,
Савăк юрă юрлама.
**Дарья Волченкова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей**

**Çĕмĕрт**
Пахчара ларать
Çĕмĕрт йывăççи.
Унăн папкисем
Ĕнтĕ туп-тулли.
Çуркунневаскарĕ,
Сарчĕ ăшшине,
Çĕмĕрт туйрĕ, сисрĕ,
Çурчĕ папакне.
Акă ĕнтĕ çĕмĕрт
Шур тумпа ларать,
Хăйĕн тутлă шăршине
Таврана сарать.
**Ксения Кузьмина.**
**Шупашкар, 35-мĕш шкул**

Кушак мана юрататъ,
Хăй ачашшăн мăрлатать.
Ман çумалла сĕртĕнет,
Тутлă аш-какай кĕтет.
**Мария Майкова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Анне**
Аннене эп юрататăп,
Ăшă сăмахсем калатăп:
«Чи лайăххи, чи хитри,
Питĕ ырă та ĕçчен».
**Елизавета Сивова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Манăн тус**
Манăн пур юратнă тус –
Пĕчĕк шурă йыт çури.
Вăл ачаш та çăмламас,
Хăмăр тĕслĕ ун хӳри.
Эп кайсассăн вĕренме
Тусăм хытă тунсăхлать,

Таврӑнатӑп ҫеҫ киле –
Савӑнса чупса пырать.
**Антон Михайлов.**
**Шупашкар, 4-мӗш лицей**

**Тӑван хула**
Пирӗн Канаш хулинче
Питӗ нумай ҫын пурнать,
Таса тытма хулана
Кашни ҫынах тӑрӑшать.
Хула урамӗсенче
Симӗс йывӑҫсем нумай,
Пысӑк ҫуртсем хушшинче
Чечек клумбисем чылай.
**Эллина Федорова.**
**Канаш, 10-мӗш шкул**

**Ӗҫчен хӗр ача**
Кайрӑм тарӑн шухӑша,
Манӑн тем те тумалла:
Кӗнеке вуламалла,
Тӗслӗхсем шутламалла,
Кашӑк-чашӑк ҫумалла,
Лавккана та каймалла,
Унта сӗт туянмалла,
Кайран вара канмалла.
**Наташа Гаврилова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 5-мӗш шкул.**

Чи илемлӗ, чи хитре
Ман юратнӑ асанне,
Кукӑльне те пӗҫерет,
Ӑслӑ пулма вӗрентет.
**Дарья Матвеева.**
**Шупашкар, 37-мӗш шкул**

**Атте**
Манӑн атте пит маттур,
Юрататӑп эп ӑна.
Паян ун ҫуралнӑ кунӗ,
Саламлатӑп чӗререн.
Эп ҫыратӑп ҫак сӑвва
Аттене хисеплесе,
Йывӑр вӑхӑтра атте
Пулӑшать мана ялан.
**Настя Федорова.**
**Ҫӗмӗрле, 1-мӗш шкул.**

Ҫӗртме уйӑх варринче
Чӑваш Ен тӗп хулинче
Назаровсен ҫемьинче
Ҫуралнӑ  арҫын ача.
Ҫӳҫӗ унӑн хуп-хура,
Куҫӗсем те хуп-хура,
Кӗлеткийӗ тӑп-тӑпӑл,
Алли-ури пит йӑрӑ.

Ачана пит юратса
Ашшĕ-амăш ят панă,
Пысăк çын пулма тесе
Пил те панă ывăлне.
**Владислав Назаров.**
**Шупашкар, 4-мĕш лицей**

Эпĕ ялта пурăнатăп,
Хамăн яла пит юрататăп!
Пирĕн ял çамрăк та вăйлă,
Халăхĕ хастар та туслă!
**Кристина Маркова.**
**Çĕрпӳ районĕ.**

Шур(ă)-шур(ă) Шупашкарта
«Асамат-Шевле» тухать,
Кашни кунах вăл пире
Ăс пухмашкăн пулăшать.
Ребуссемпе кроссвордсем,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ вăйăсем,
Халапсем, юптарусем,
Конкурссем, ӳкерчĕксем,
Халăхсен кунçулĕсем –
Килĕшеç пире вĕсем.
**Анастасия Петрова.**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул**

Йăмраллă ял…
Вырнаçнă эсĕ айлăмра.
Йĕри-тавра хура вăрман,
Хĕле кĕтет вăл – çап-çара!
Сип-симĕс уй –
Кĕрхи ырашĕ шăтнă ав!
Иртет каллех туй хыççăн туй…
Сисместпĕр те – çитет пукрав.
Кĕрхи илем…
Кĕрхи илемĕ куç тулли!
Паланĕ, вĕрени, пилеш…
Кĕрет клете тырри-пулли.
Шап-шурă юр!
Пĕрремĕш юр та ӳкрĕ ав!
Каллех савăнтарать чуна!
Шап-шурă халь йĕри-тавра!
Хăварĕ тӳрĕ йĕр çуна …
**Анастасия Петрова.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Тухрăм каçпа урама,
Тупрăм хамăн çăлтăра.
Чĕнчĕ мана выляма,
Ырлăх чĕртрĕ чунăмра.
**Элла Мартьянова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Çанталăк тĕлĕнтермĕшĕ**
Хĕвел пăхрĕ те йăл кулчĕ

Кĕр уйăхне пăхмасăрах,
Унтан вăйлă вăл макăрчĕ
Нимрен вăтанмасăрах.
Такама çак кӳрентерчĕ,
Çиллентерчĕ самаях.
Шартлаттарса шăнтса лартрĕ
Ӳсен-тăрана шеллемесĕрех.
Йывăра-çке чăтаймасăр
Шарт! хуçăлчĕç йывăçсем.
«Кĕленче» ăшне пытанчĕç
Таврари пур туратсем.
**Полина Орлова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Тăван çĕршыв**
Ман тăван çĕршывăм,
Эп çуралнă кĕтесĕм,
Эсĕ – ман юратăвăм,
Эсĕ – манăн пурнăçăм.
Ман пĕрремĕш утăмсем –
Чăваш Енĕн çĕрĕнче,
Ман пĕрремĕш сăмахсем –
Çак çĕршыв ытамĕнче.
**Михаил Павлов.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Манăн пур кушак çури,
Пулăшать те вăл мана.
– Санăн куçусем хитре,
Юрататăп эп сана!
**Яна Чернова.**
**Шупашкар, 4-мĕш лицей**

**Аннеçĕм**
Савнă çыннăм – аннеçĕм,
Чун юратнă аннеçĕм,
Санпа эпĕ мухтанатăп,
Эс пурришĕн савăнатăп.
Санăн сар кăтра çӳçӳ,
Кăн-кăвак хитре куçу
Тухмĕç манăн асăмран,
Сана хыт юратнăран.
**Ирина Семенова.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Пирĕн Çĕрпӳ хулинче
Çынсем ырă та ĕçчен.
Вĕсем Çĕрпĕве ырлаççĕ,
Тирпей-илемре тытаççĕ.
**Аня Егорова.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул**

**Хăмăр упа**
Пысăк хăмăр упа
Вăрманта çӳренĕ,
Йĕкел, çырла çинĕ.

Хӗл ҫитсессӗн, сивӗре,
Шӑтӑка пытаннӑ,
Тутлӑ тӗлӗк курнӑ.
Ҫуркунне хӗвелӗ
Упана вӑратнӑ –
Вӑл апат ҫиме уттарнӑ.
**Валерия Чугунова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 5-мӗш шкул.**

Шурӑ юр пӗрчисем
Сывлӑшра ҫаврӑнаҫҫӗ.
Ерипен ҫӗр ҫине
Ӳксе вӗсем выртаҫҫӗ.
**Даниил Федоров.**
**Шупашкар, 64-мӗш шкул.**

Ирхине ирех эп тӑтӑм,
Хӗвеле ырӑ кун сунтӑм.
Чупса тухрӑм урама –
Шурӑ юр йӗри-тавра.
**Маша Никитина.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 9-мӗш шкул.**

Юр ҫӑвать, юр ҫӑвать,
Ачасене илӗртет:
Юрпа перкелешме,
Кӗлеткесем ӑсталама,
Ҫунашкапа, йӗлтӗрпе
Тӑвайккинчен ярӑнма.
Эх, аван-ҫке выляма,
Хӗл кунӗпе савӑнма!
**Мария Мешкова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул**

Шурӑ хурсем шыва каяҫҫӗ,
Чӗпписене ертсе пыраҫҫӗ.
Ҫитрӗҫ ҫарана шурӑ хурсем,
Ешӗл курӑк ҫирӗҫ пӗчӗк чӗпсем.
**Стефания Иваницкая.**
**Шупашкар, 4-мӗш гимнази**

Костя шкулта вӗренет,
„Пиллӗк“ паллӑсем илет,
Амӑшӗ ӑна ырлать,
Ӑшӑ сӑмахсем калать.
**Константин Иванов.**
**Шупашкар, 35-мӗш шкул**

Ҫӳлте янкӑр тӳпере
Вылянать сарӑ ҫӑмха,
Йӑлтӑр-ялтӑр ҫуталса
Илӗртет пур ачана.
Ҫӳлтен илӗттӗм татса
Пӗтӗм чунтан юратса,
Выльӑттӑм унпа ирччен
Кӑмӑл тулса ҫитиччен.

Хĕвелĕм – сар çăмха,
Вылян, çутат савăнса!
Кирлĕ эс çут тӳпене,
Сар çăмха, эс – çут тĕнче!
**Юлия Иванова.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази**

Савнă çыннăм – аннеçĕм,
Чун юратнă аннеçĕм,
Санпа эпĕ мухтанатăп,
Эс пурришĕн савăнатăп.
Санăн сар кăтра çӳçӳ,
Кăн-кăвак хитре куçу
Тухмĕç манăн асăмран,
Сана хыт юратнăран.
**Ирина Семенова.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Йĕри-тавра шурă юр,
Пакшасем ташлаççĕ, кур.
Мулкач йĕрне пытарать,
Чее тилле улталать.
**Полина Березенцева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Хĕллехи савăнăç**
Акă çитрĕ сивĕ хĕл,
Вĕçсе анчĕ шурă юр.
Ачасем юрпа выляççĕ,
Конькипе те ярăнаççĕ.
Шурă хĕле юрататăп,
Йĕлтĕрпе куллен чупатăп,
Ту çинчен эп ярăнатăп –
Уçă сывлăшпа сывлатăп.
**Мария Семенова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

Часах Çĕнĕ Çул çитет –
Пур ача ăна кĕтет.
Уява хатĕрленетĕп,
Çĕнĕ сăвă вĕренетĕп.
**Степан Тихонов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 6-мĕш гимнази.**

Манăн çывăх юлташ пур,
Вăл сăпайлă та маттур.
Пулăшать мана ялан,
Пурăнатпăр пит аван!
**Алексей Петров.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул**

**Пирĕн çемье**
Атте кунĕпе ĕçлет,
Анне кукăль пĕçерет,
Асанне чăлха çыхать,
Асатте юмах ярать.

**Екатерина Миронова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул**

Эпĕ хулара пурăнатăп,
Ăна питĕ юрататăп!
Пирĕн хула пит хитре,
Халăхĕ те пит ĕçчен.
**Аня Цаплина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Хĕллехи вăрман**
Шурă тумтир тăхăнса
Хурăн ачаш çывăрать.
Юр пĕрчийĕ ташласа
Çӳл тӳпере çаврăнать.

Шыв пăрпала хупланса
Шеп тĕлĕксем куркалать.
Пĕчĕк мулкач хăраса
Йывăç айне пытанать.

Хĕл Мучийĕ шăхăрса
Çил-тăмана хускатать.
Кашкăр выççан, уласа
Чĕр чунсене хăратать.
**Вика Денисова.**
**Шупашкар, 49-мĕш шкул**

Юр пĕрчи  пĕрмай вĕçет,
Мана выляма чĕнет.
Хĕл Мучийĕ чĕпĕтет,
Ăшă тумланма сĕнет.
**Вика Ельникова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Ăçта эсĕ, Хĕл Мучи?**
Юр çăвать те ирĕлет,
Татах «çуркунне» çитет.
Пӳрт тăрринчен тек тумлать,
Урамра та шыв юхать.
Хĕлле сивĕ пулмалла,
Шурă юрăн çумалла!
Хатĕр çĕнĕ çунашка –
Ăçта халь ярăнмалла?
Килех, килех Хĕл Мучи,
Пирĕн çĕр-шыв чи хитри!
Килех, чипер Юр пике,
Халĕ кунта пит хитре!
Эсир пулăшнипеле
Çитĕ Çĕнĕ Çул кĕçех.
Эпир лайăх вĕренсе
Илĕпĕр сиртен парне!
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Часах Çĕнĕ Çул çитет –

Пур ача ăна кĕтет.
Уява хатĕрленетĕп,
Çĕнĕ сăвă вĕренетĕп.
**Степан Тихонов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 6-мĕш гимнази.**

Манăн пĕчĕк шăллăм пур,
Пит хаваслă та маттур,
Ирех тăрать, çăвăнать,
Садика каймаваскать.
**Артем Мамонтов.**
**Елчĕк районĕ, Елчĕкри шкул.**

**Хĕл илемĕ**
Шурă шупăр тăхăнтартнăн
Курăнаççĕ йывăççем.
Куçкĕски пек йалтăртатнăн
Туйăнаç юханшывсем.
Пит илемлĕ юр пĕрчийĕ
Шăппăн ӳкрĕ çĕр çине.
Тен, татах та вăл çĕкленĕ,
Пĕлмест хăйĕн шăпине.
Ак лăпланчĕ çиллĕ тăвăл,
Хĕвел тухрĕ йăл кулса.
Çу пек ирĕлчĕ ман кăмăл,
Чун юрларĕ савăнса.
**Виктория Селиванова.**
**Шупашкар, 4-мĕш лицей.**

Акă çитрĕ Çĕнĕ çул!
Пӳрт алăкне уçса хур,
Чĕн ăна мала иртме,
Пулма пирĕнпе пĕрле.
**Яна Иванова.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

**Кукаçи**
Манăн пур кукаçи,
Вăл ялан лашапа.
Пурăнать савăнса
Пирĕн кукамайпа.
Унăн пур икĕ хĕр,
Тата икĕ кĕрӳ,
Телей кӳреç мăнукĕсем –
Катя, Дима, Егор, Степа.
Ырлăх-сывлăх, телей,
Вăрăм ĕмĕр сана, кукаçей.
**Катя Петрушкина.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

**Раштав**
Юрлă-тăманлă раштав:
Сивĕ çил вĕрет пĕрмай,
Йăрăс пӳллĕ хурăн, ав,
Кĕмĕл çакрĕ сăнне май,
Ват юман та шавласа

Çĕлĕксĕр сĕнксе тăрать,
Шурă кĕрĕк тăхăнса
Хĕл сиввине вăл чăтать.
**Валерия Николаева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Çĕнĕ çула кĕтсе...**
Çĕн çула халалласа
Сăвă çыртăм тăрăшса.
Асанне мана мухтать,
Асаттеçĕм те ырлать.
Хĕл Мучийĕ ман сăвва
Тимлĕ итлĕ савăнса.
Парне парĕ Юр пике,
Пуçран шăлĕ аллипе.
**Диана Матвеева.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

**Юратнă анне**
Юратап, анне, сана –
Пурнăç панă эс мана.
Кирек хăçан та пулăшан,
Чунран ачушăн савăнан,
Чирлесен пăшăрханан,
Çĕрĕпе çумра ларан,
Уроксем ăнлантаран,
Пурнăç çулĕ çине кăларан.
**Андрей Романов.**
**Канаш, 6-мĕш шкул.**

**Хĕлле çитрĕ**
Ирхине эп тăтăм,
Кантăкран эп пăхрăм –
Таврара шап-шурă юр.
Хĕлле çитрĕ! Акă, кур!
Урама эп тухрăм,
Йĕлтĕре эп сыртăм.
Юр пĕрчи çилпе вылять,
Чунăма савăнтарать.
Юлташсемпе ярăнатпăр,
Кăшкăратпăр, шуйхашатпăр,
Васкамастпăр килелле –
Эх, илемлĕ-çке хĕлле!
**Альберт Данилов.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Манăн пĕчĕк шăллăм пур,
Вăл ачаш, çапах маттур.
Эпĕ ăна юрататăп,
Кашни кун сывлăх сунатăп.
Вăл ача садне çӳрет,
Унта тем те ӳкерет.
Шăллăм мана юрататать,
Хытă-хытă ыталать.
**Ангелина Семенова.**
**Канаш, 1-мĕш шкул.**

Акă çитрĕ Çĕнĕ çул,
Килчĕ кĕтнĕ Хĕл Мучи,
Илсе килчĕ вăл парне
Мана валли – пукане.
**Татьяна Алексеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Урамра шур юр çăвать,
Пире вăл савăнтарать.
Йĕлтĕрпе тухса чупатăп,
Эпĕ сывлăхлă пулатăп.
**Максим Анисимов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 6-мĕш гимнази.**

Хĕл те çитрĕ. Урамра
Çавра çил вылять манпа.
Коньки сырăп урана,
Ярăнăп эп юлташпа.
**Дарья Никитина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Ман юратнă  шăллăм пур,
Вăл сăпайлă та маттур.
Пулăшать вăл аннене,
Çитерет чăх-чĕпсене,
Хăй тăвать уроксене,
Выляма та ĕлкĕрет.
Юрататăп шăллăма
Пултарулла пулнăран.
**Вика Васяткина.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Анне пирĕншĕн ялан
Юлташ тата учитель.
Ун çăл куç пек куçĕсем
Ялан хаваслă çиçчĕр.
**София Афанасьева.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Юмахри пекех çанталăк –
Манăн кăмăл питĕ савăк.
Илтĕм çĕнĕ конькине,
Эп васкарăм пăр çине.
**Саша Васильев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Пирĕн шкулăн – юбилей,
Ку вăл пирĕншĕн телей!
Саламлатпăр, ыр сунатпăр,
Пурте пĕрле савăнатпăр!
**Настя Миронова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Салтак пулăп çитĕнсен…**
Салтак пулăп çитĕнсен,

Вĕренетĕп халь шкулта.
Тăван çĕрĕн чиккине
Сыхлăп сĕмсĕр тăшмантан.
Юрататăп хам çĕре,
Юрататăп çемьене.
Эп пĕлетĕп ачаллах
Вĕсене сыхламалла!
Аттепеле асатте
Салтак пулнă çамрăк чух.
Вăрçăра ват асатте
Пуçне хунă. Манас çук!
Çывхарса килет уяв.
Çавăнпа асаттене,
Кукаçипе аттене
Саламлас килет чунтан.
Вĕсене чун-чĕререн
Ырă сунса, юратса,
Çутă уяв ячĕпе
Саламлатăп юрăпа!
Ват асаттене каллех
Асилетпĕр çемйипех.
Ячĕ – халĕх асĕнче,
Паттăрлăхĕ – ĕмĕре!
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Шурă-шурă юр çăвать,
Юр пĕрчи вĕçет.
Уй-хирсем юрпа шуралчĕç –
Савăнас килет.
**Дарья Жевалюкова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Эп юмах вулатăп,
Вулатăп та шутлатăп:
«Асамçă ман пуласчĕ,
Юлташсемпе савнасчĕ».
**Катя Михайлова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 6-мĕш гимнази.**

**Малашлăха шанатăп**
Юратнă халăхăм, эп санăн
Çут малашлăхна шанатăп.
Пурнасчĕ туслăхра ялан,
Пĕр-пĕринпе пĕр харкашмасăр.
Итлесчĕ ваттисен ыр сăмахне,
Вĕсем ăс-тăн валеçнине,
Пурнасчĕ çак çутă тĕнчере
Тăван çĕршыв ятне хисеплесе.
Çапах та манас марччĕ чĕлхене –
Чăваш çыннийĕн ылтăнне,
Илсе çитерĕ вăл пире
Таçти-таçти çĕрсем çине.
**Марта Печкова.**
**Шупашкар, 44-мĕш лицей.**

Юбилей ячĕпе, тăван шкулăм,
Саламлать вĕренсе тухакан.
Пурнăçра пулакан ырă пулăм
Пĕтĕмпех эсĕ ăс панăран.
**Полина Николаева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Хĕлле**
Пăхрăм эпĕ кантăкран –
Таврара шап-шурă.
Хĕпĕртерĕм чĕререн
Юр çуса лартнишĕн.
Тухрăм эпĕ урама
Шурă юрпа выляма,
Турăм унтан кĕлетке
Пулса тăчĕ Юр пике!
Савăнатăп хĕл ларнишĕн,
Шурă юр çунишĕн,
Йĕлтĕрпе те ярăнмашкăн
Тухма пултарнишĕн.
**Никита Васильев.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Манăн пĕчĕк йытă пур,
Унăн ячĕ – Салампур.
Каçхине вăл çывăрать,
Кăнтарлă манпа вылять.
**Аня Егорова.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул**

Паян ирхине тăрсан
Тăтăм кантăкран пăхса:
Шап-шурă юр çăвать,
Урама тухма ыйтать.
Эп тухатăп урама
Тăхăнтартса шăллăма,
Вăл юратать выляма
Шурă-шурă юрпала.
Юр пике те вăл тăвать,
Тĕрлĕ мĕлке ăсталать,
Тăвайккинчен ярăнать,
Вăл хĕллене – кăмăллать.
**Юлия Плечова.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Хĕл çитнишĕн савăнатăп,
Çунашка илсе тухатăп,
Çĕнĕ йĕлтĕре сыратăп,
Конькипе те ярăнатăп.
**Анна Макарова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Кăсăя**
Турат çинче кăсăя
Ларать кунĕпе паян.
Çиес килет пулмалла

Мĕскĕн кайăкăн паян?
Тухрăм часах урама
Хутăм сырăша апат.
Мана курсан кăсăя
Вĕçсе анчĕ савăнса,
Сăхкаларĕ пĕрмаях
Мана чунтан тав туса.
**Игорь Алексеев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Лапка-лапка юр ӳкет,
Манăн чунăм хĕпĕртет,
Юлташ урамра тăрать,
Вылямашкăн йыхăрать.
Йăмăк чунтан савăнать,
Çĕнĕ çунине ырлать,
Тантăшне вăл шав чĕнет,
«Пĕрле ярăнăпăр», – тет.
**Таня Егорова.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

Трактор суха сухалать,
Тăрăлтатса сăмахлать:
– Тăр-тăр-тăр, тăр-тăр-тăр,
Тăрăшмасан мĕн пултăр!
**Даниил Данилов.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

Сукмакпа утатăп хирелле,
Киленетĕп хĕл илемĕпе.
Шур юртан тăватăп кĕлетке,
Ах, мĕнле илемлĕ çут тĕнче!
Юля Скоробогатова.
Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.
Анне, сана саламлатăп
Мартăн саккăрмĕшĕпе.
Çирĕп сывлăх çеç сунатăп:
Нихăçан та ан чирле.
**Елизавета Аввакумова.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

Манăн анне пит ĕçчен,
Вăл хитре, маттур, ĕлккен.
Ирех тăрать, çăвăнать,
Вара ĕçе тытăнать.
Ĕнине те вăл сăвать,
Пăрушне те шăварать,
Сыснине апат парать,
Хурсене шыва ярать.
Выльăхсене пуçтарать,
Унтан пӳртелле васкать.
Апат пăшлатса пиçет –
Шăршипеле илĕртет.
**Валерия Егорова.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне,
Ăшăтаç кунсем.
Хĕвел çӳлтен тӳперен
Ярать ăшă саламсем.
Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне,
Ешереççĕ курăксем.
Акă ĕнтĕ кăнтăртан
Вĕçсе килчĕç кайăксем.
**Дарья Гладкова.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Нарăс уйăхĕ пулин те
Урамра юр ирĕлет.
Çанталăк вылять пулин те
Пурпĕрех эп чирлемес.
Кашни ир эпĕ çăватăп
Пит-куçа сип-сив шывпа,
Уçă сывлăшра çӳретĕп
Сывлăха эп упраса.
**Ангелина Данилова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Ашшĕ-амăшĕшĕн мĕн лайăх?
Ача-пăча лайăх вĕренни – çав лайăх.
Кушакшăн мĕн лайăх?
Хырăмĕнчен ачашлани – çав лайăх.
Маншăн мĕн лайăх?
Атте-анне сывă пулни – çав лайăх!
**Карина Князева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

Хисеплетĕп аттене,
Юрататăп аттене.
Йĕлтĕрпе ирех паян –
Спортпа туслă вăл ялан.
Ман атте хастар, хăюллă,
Тăрăшса ĕçлет.
Ĕçĕнче вăл пултаруллă,
Кашни çын ăна пĕлет.
**Валерия Васильева.**
**Канаш, 6-мĕш шкул.**

Кăпăшка та шурă юрĕ
Кунĕпех паян вăл çурĕ
Таврана илемлетсе,
Шурă кавирпе витсе.
Канмалли кун йĕлтĕрпе
Тухрăмăр ирпе-ирех.
Тăвайккинчен ярăнма
Чупрăм эпĕ шăллăмпа.
**Снежана Пушкина.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Вĕçсе килчĕç кайăксем
Аякри çĕр-шывсенчен,
Вĕçсе килчĕç те вĕсем,

Шăрантарчĕç юрăсем.
**Лера Крутякова.**
**Канаш, 1-мĕш шкул**

Вĕренни пурнăçра кирлине
Çĕр çинче халь пĕлет кашниех.
Пĕлӳпе хăнăху пухнине
Ăнланса пурнăçа кĕртмеллех.
**Степан Тихонов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Пурте тухăр урама –
Пысăк савăнăç унта!
Ачасем хĕрсе чупаççĕ,
Юр кĕлеткисем тăваççĕ,
Тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ.
Тĕслĕх илĕр Ульхаран:
Конькипе халь ярăнать,
Унтан йĕлтĕрне сырать,
Çунине те вăл манман.
Тухăр, тухăр урама –
Пурте пĕрле выляма!
**Ксения Дюкина.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Акă çитрĕ çуркунне,
Çутçанталăк вăранать.
Хĕвел хăйĕн шевлине
Сапать пĕтĕм тĕнчене.
**Денис Величко.**
**Шупашкар, 3-мĕш шкул**

Иртсе кайрĕ ак хĕлле,
Çитрĕ ырă çуркунне.
Сарă çутă хĕвеле
Илчĕ хăйĕн ытамне.
**Яна Алексеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей**

Юратнă аннем!
Эсĕ манăн чи хитри,
Чи асамли, чи ырри!
Кăвак куçлă, йăрăс пӳллĕ,
Йăл куллу ытарайми.
Аннеçĕм, пурăн ĕмĕр –
Эсĕ маншăн чи хакли.
**Александра Андреева.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

Килчĕ ырă çуркунне,
Хĕвел ячĕ ăшăтса.
Çурхи хĕвел ăшшипе
Тĕнче тăчĕ ташласа.
Тĕрлĕ кайăк сассине
Итлес килет кăмăлпа.
Савăнтарать çуркунне

Тĕрлĕ чечек-курăкпа.
**Дарья Илларионова.**
**Шупашкар, 4-мĕш лицей**

Акă çитрĕ çуркунне,
Савăнтарать çынсене.
Урамра хĕвел пăхать,
Вăрманта чечек тухать.
**Милена Иванова.**
**Шупашкар, 6-мĕш шкул**

Эп çуралнă Катекре
Хитре чăваш ялĕнче.
Пур кунта капмар çуртсем,
Ешереççĕ сачĕсем,
Тăрăшуллă çыннисем –
Çавăнпа килет илем.
**Аделия Иванова.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Акă çитрĕ çуркунне,
Савăнтарать вăл пире,
Ачасем шкула васкаççĕ,
Пурте йăл кулăпа çиçеççĕ.
**Вика Лукина.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Килчĕ ырă çуркунне,
Савăнтарчĕ вăл пире.
Ытарайми кăмăлне –
Йăлт валеçрĕ парнине.
**Алексей Клесов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей**

Ку мĕн? Ку вăл – мечĕк.
Мечĕк çĕнĕ, вăл пит пĕчĕк.
Эп тапатăп выляса,
Мечĕк вĕçет аякка.
Мечĕк сикет те вылять,
Ачсене савăнтарать.
**Ксения Иванова.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Шăнкăрч килчĕ васкаса
Юратнă Тăван çĕр-шывне.
Савăнтарчĕ çынсене
Хăйĕн илемлĕ кĕввипе.
**Екатерина Трофимова.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Сивĕ хĕл те иртрĕ,
Çитрĕ çуркунне.
Шурă тумне хыврĕ
Пирĕн çут тĕнче.
Симĕсленчĕ ешĕл
Пирĕн çĕр анне.

Тăсрĕ кунĕн-çĕрĕн
Шăнкăрч юррине.
**Анастасия Давыдова**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул**

Акă çитрĕ çуркунне:
Кайăксем юрлаççĕ,
Йывăçсем папка сараççĕ,
Çут çанталăк чĕрĕлет,
Савăнас, выляс килет.
**Максим Васильев.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

**Ака**
Ака – илемлĕ, савăнăçлă уйăх,
Кунта пуриншĕн пурнăç пуçланать.
Юр та çук, сип-симĕс улăх
Çыншăн савăнăç ку шутланать.
Ака уйăхĕнче хĕвел йăл кулать,
Чуна уçса яраççĕ кайăк юррисем.
Пĕр кун та юратусăр пулмасть –
Юратаççĕ пурте пĕр-пĕрне çынсем!
Ака, эсĕ нихăçан та пĕтместĕн.
Ака, эсĕ нихăçан ан вĕçлен.
Эс пĕрмай çынсене уяв парнелен,
Юрататăп сана, ака, чĕререн!
**Степан Герасимов.**
**Канаш, 1-мĕш шкул.**

**Çуркунне çитрĕ!**
Кайăксем вĕçсе килеççĕ,
Йăвасене йышăнаççĕ,
Чĕписене кăлараççĕ,
Хитре юрăсем юрлаççĕ.
Пĕтĕм тĕнче чĕрĕлет,
Хĕвел хытăрах хĕртет.
Чĕрчунсем те вăранаççĕ,
Шăтăкĕсенчен тухаççĕ.
Эх, çуркунне, çуркунне,
Килĕшетĕн эс пире!
**Виктория Яковлева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

Урампа упа утать,
Унăн ури уксахлать.
Уксах уралла упа
Улталаймасть улăпа.
**Егор Захаров.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

**Мулкач**
Хăлхисем вăрăм,
Кишĕр юратать.
Шăлĕсем çивĕч,
Кашкăртан хăрать.
Ăна тытаймастăн –

Вăл санран тарать.
Роман Сироткин,
**Даша Иванова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Акă манăн анне!
Вăл ытла та хитре.
Вăл мана юратать,
Ырлăх-сывлăх сунать.
**Степан Мемиков.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

Шкул ачи эп, çавăнпа –
Кулленех тăван шкула
Утатăп ăслăлăх пухма.
Яри уçатăп алăка.
**Настя Михеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Мĕн лайăх?**
Манăн килте мĕн лайăх?
Анне, атте пулни – çав лайăх.
Асаттепе асанне патĕнче мĕн лайăх?
Кушакпа йытă пулни – çав лайăх.
Тата пурте сывă пулни – çав лайăх!
**Елена Иванова.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

Çуркунне те акă çитрĕ:
Çут çанталăк вăранать,
Кайăк-кĕшĕк вĕçсе килĕ,
Чунăмçăм хавхаланать.
**Диана Митрофанова.**
**Канаш, 6-мĕш шкул.**

Тӳрĕ кăмăллă, хастар,
Тăрăшуллă та вăр-вар
Халалларăн эс пулма,
Тав тăватăп шкулăма!
**Виталий Егоров.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Вĕренсе тухакан! Алăк уçă ялан!
Ăс панă шкула эс ан ман нихăçан!
Эсĕ кĕтнĕ хăна, чи хисеплĕ тăван,
Паянхи уявра эс пулсан пит аван!
**Стас Петров.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Тăтăм та эп куртăм –
Урамра лаша тăрать,
Çилхи унăн питĕ вăрăм,
Вăл чупмашкăн юратать.
Тухрăм эпĕ ун патне,
Тăтăм шурă ут çумне.
Тĕкесшĕн пулчĕ вăл мана,

Çитертĕм те – тĕкмерĕ.
Юратрăм питĕ эп ăна,
Туслашрăмăр унпа,
Вăл савнать мана курсан,
Ун патне пырса тăрсан.
**Даша Иванова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Симĕс курăк шăтса тухрĕ
Пирĕн пахчара,
Тюльпансем те çурăлаççĕ
Питĕ васкаса –
Çĕнтерӳ кунне кĕтеççĕ
Паттăрсене чыслама.
**Мария Тумашкова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Шурă юрĕ ирĕлет,
Кайăк юрă кĕвĕлет,
Канавсенче шыв юхать,
Улăхра чечек тухать.
**Егор Мешалкин.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

Анне пирки калаççĕ:
Аллисем ун ылтăн!
Эпĕ те çирĕплететĕп:
Чăннипех те ылтăн!
**Яна Васильева.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Аннене эп юрататăп,
Вăл та мана юратать.
Эпĕ ăна тав тăватăп,
Ăшă сăмахсем калатăп.
**Илья Егоров.**
**Канаш, 5-мĕш шкул.**

Акă çитрĕ çуркунне,
Хĕвел пăхать ман çине.
Кайăксем вĕçсе килеççĕ,
Йывăçсем те чĕрĕлеççĕ.
**Мария Григорьева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул**

**Кăвакал чĕпписем**
Сар кăвакал чĕпписем
Шывра ишсе çӳреççĕ.
Ишсе-ишсе çӳресен
Шыва чăмса илеççĕ.
Сар кăвакал чĕпписем
Симĕс курăк сăхаççĕ.
Унтан нарт-нарт-нарт! тесе
Каллех шыва чăмаççĕ.
**Милания Мухтеева.**
**Шупашкар, 50-мĕш шкул.**

Кĕçех тавралăх симĕс тум тумланĕ,
Ем-ешĕл курăнĕ тĕнче.
Йăл кулса çынсем те савăнĕç
Çут тĕнчен ырлăхĕпе.
Садсем кĕçех çеçке çурĕç
Савăнса хĕвелĕн ăшшинче,
Тутлă шăршине ак сарĕç
Сывлама туллин ыр техĕмне.
**Анастасия Лезина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Илемлĕ вăхăт çуркунне –
Мана вăл питĕ килĕшет.
Йывăç-курăк ешерсе
Çут çанталăк чĕрĕлет.
Ачи-пăча савăнса
Хавассăн урамра вылять,
Хутран кимĕсем туса
Шыв çийĕпе юхтарать.
**Наталья Игнатьева.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Кашни çулах çуркунне
Эп лартатăп вĕрене.
Сывă ӳсчĕр ман туссем –
Çут çанталăк ачисем.
**Дмитрий Данилов.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

Хура курак сассипе
Эп варантăм ир-ирех.
Çитрĕ ĕнтĕ çуркунне –
Чĕрĕлет тинех тенче.
Кĕçех килĕç шăнкăрчсем,
Савăнтарĕç чĕрене
Янкăр уçă сассипе,
Шăнкăр-шăнкăр юррипе.
Сарă хĕвел ăшшинче
Тухĕç кăвак çеçпĕлсем.
Çитрĕ ырă çуркунне
Илем кӳрсе тĕнчене.
**Никита Васильев.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Шурă юрĕ макăрать,
Хĕл иртнишĕн хурланать.
Кăвак çеçпĕлĕ тухать
Çур çитнишĕн савăнать.
Симĕс курăк ешерет,
Хĕвелĕ те пит хĕртет.
Кайăкĕ те ав юрлать,
Çуркуннене вăл мухтать.
**Виктория Федотова.**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул**

Урамра мĕнле хитре!
Çитрĕ-çитрĕ çуркунне!
Килчĕç кайăксем вĕçсе,
Тытăнчĕç шăрантарма юрра.
Савăк халĕ чунăмра:
Тĕнче тăхăнчĕ çĕн тум,
Çĕн вăйпа, çĕн хăватпа
Чĕрĕлет тăван çĕр-шыв!
**Александра Миронова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 3-мĕш шкул**

Акă çитрĕ çуркунне
Пирĕн Чăваш çĕр-шывне.
Çулçăсем тухаççĕ – кур,
Савăнма сăлтавĕ пур!
**Дарья Иванова.**
**Шупашкар, 6-мĕш шкул.**

Туссăр эп пурăнаймастăп,
Туссемпе эп çухалмастăп,
Вĕсем пуршăн савăнатăп,
Пулăшмашкăн тăрăшатăп.
Эп шанатăп вĕсене –
Туслăх пытăр ĕмĕре!
**Татьяна Музякова.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Пысăк пĕлӳллĕ пулма тăрăшатăп,
Шкул ӳсĕмсем тунипе мухтанатăп,
Уяв ячĕпе чĕререн саламлатăп,
Ырă ятна малалла эп тасатăп.
**Даниил Афанасьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**